27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
12
ЫТЛАРИКУН
180(6675) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ХИСЕП ХӐМИ

Ӗҫсыннн депутачӗсен Шупашкар рай совет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртес енӗпе тухӑҫлӑн тата лайӑх ӗҫленӗшӗн, государствӑна тырӑ парса татнӑшӑн, ял хуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫак колхозсене кӗртнӗ:

3. «Память Ленина» колхоз (председателӗ Егоров юлташ). Ку колхоз 154 гектар тӗштырра кӗске срокра тата лайӑх пахалӑхпа вырса пӗтернӗ. Кӗрхи тырӑсем акмалли государство планне кӗске срокра тултарнӑ тата государствӑна пур тӗрлӗ тырра та пӗтӗмпех парса татнӑ.

4. «Вторая пятилетка» колхоз (колхоз председателӗ Карпеев юлташ). Ку колхоз 114 гектар тӗштырра пӗтӗмпех лайӑх пахалӑхпа вырса пӗтернӗ. Кӗрхи тырӑсене акмалли государство планне пӗтӗмпех тултарнӑ, обязательствӑсем тӑрӑх пур тӗрлӗ тырӑсене те парса татнӑ.

ОКТЯБРЬ УЯВӖ УМӖНХИ СОЦИАЛИЗМЛӐ ӐМӐРТУ

Виҫӗмкун пирӗн хаҫатра Мускаври Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ завод коллективӗ чӗнсе калани пичетленсе тухрӗ. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавасланнӑ коллектив, хӑй ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илсе, Совет Союзӗнчи рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене, Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци пулнӑранпа 27 ҫул тултарнӑ ятпа социализмлӑ ӑмӑрту пуҫарса, промышленноҫӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемшӗн, кашни завода, фабрикӑна, предприятие кӑтартуллӑ ӗҫлекен тӑвассишӗн кӗрешме чӗнет.

Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ завод коллективӗн пуҫарӑвӗнче пӗтӗм совет халӑхӗн, рабочи класӑн хальхи вӑхӑтри, вӑрҫӑн чи йывӑр та татӑклӑ тапхӑрне кӗнӗ чухнехи, пархатарлӑ шухӑш-кӑмӑлӗ, патриотизмлӑ туйӑмӗ палӑрса тӑрать. Паттӑр рабочи класс Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, социализмлӑ ӑмӑрту ялавӗ айне тӑрса, промышленноҫа аталантарас тӗлӗшпе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем турӗ. Совет промышленноҫӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене тӳссе ирттерчӗ кӑна мар, вӑл фронтпа ҫӗршыв валли продукци туса кӑларассине пӗрмаях ӳстерсе пырать.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту пуҫланнӑранпа иртнӗ икӗ ҫул ытларах вӑхӑтра ҫӗршер предприятисем чаплӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ. Оборонӑн Государственный Комитечӗн тата ВЦСПС-па Халӑх Комиссариачӗсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Пирӗн республикӑри предприятисенчен ытларахӑшӗсем иртнӗ август уйӑхӗнче чылай пысӑк ӳсӗмсем турӗҫ. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод уйӑхри плана ирттерсе тултарнӑ. Вырӑнти промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн предприятийӗсем тата промысла коопераци артелӗсем те хӑйсен ӗҫне лайӑхлатрӗҫ. Социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн август уйӑхӗнчи итогӗсем тӑрӑх, ӑмӑртура мала тухнӑ Кувакино районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбинатне, Тӑвай районӗнчи промкомбината, Шупашкарти «Красный мебельщик» артеле Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата ытти чылай предприятисене премисем панӑ.

Социализмлӑ ӑмӑртура совет ҫыннисен хӑватлӑ пултарулӑхӗ, вӗсем Тӑван ҫӗршыва чӗререн юратни, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме яланах хатӗр пулни уҫӑмлӑн палӑрать. Социализмлӑ ӑмӑрту промышленноҫра ӗҫлеме вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пынӑ ҫамрӑк рабочисене вӗрентсе воспитани пама пулӑшрӗ.

Большевиксем нихҫан та тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармӑҫҫӗ. Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ умне лартнӑ историллӗ задачӑсем тылри кашни ӗҫсыннине пӗтӗм вӑй-хӑвата хурса ӗҫлеме хушаҫҫӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ халӑхӑн пӗтӗм пултарулӑхне мобилизацилеме, рабочи класӑн производствӑллӑ пултарулӑхне, творчествӑллӑ активлӑхне малалла ҫӗклеме хушать. Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту ҫав ӗҫсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыма майсем туса парӗ.

Иккӗленмелли ҫук, предприятисемпе артельсенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем, Сталин ячӗпе тӑракан завод коллективӗ Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва организацилеме чӗнсе каланине тулли кӑмӑлпа йышӑнса илсе, хӑйсем ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илӗҫ. Анчах обязательствӑсем йышӑнни ӑмӑртӑва вӑйлатса пырас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене пурнӑҫа кӗртнине пӗлтермест-ха. Обязательствӑсем йышӑнни ӗҫӗн пуҫламӑшӗ кӑна пулать.

Партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен, хуҫалӑх руководителӗсен обязательствӑсем йышӑннӑ хыҫҫӑн пӗтӗм производствӑна ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пырас, производство технологине лайӑхлатас, продукци хакне йӳнетес тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатас май организацилемелле. Ӗҫе тӗрӗс йӗркелемесӗр, ӗҫ условийӗсене лайӑхлатмасӑр, перекетлӗх режимне ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлемесӗр, рабочисене техникӑна вӗрентмесӗр обязательствӑсене те пурнӑҫа кӗртме йывӑр. Ҫакӑн ҫинчен пӗр минутлӑха та манма юрамасть.

Предприяти руководителӗсемпе инженерла-техникла работниксен, производствӑри мӗнпур командирсен ӗҫӗн ҫӗнӗ меточӗсене анлӑн сарассишӗн куллен тимлӗн тӑрӑшмалла. Пуриншӗн те паллӑ, поточнӑй методпа ӗҫлесси ҫине куҫни продукци кӑларассине ӳстерме майсем туса парать. Апла пулсан, ҫав паха метода сарассишӗн куллен тимлӗн ӗҫлемелле. Социализмлӑ ӑмӑртура малта пыракансен, стахановецсен паха опычӗсене пур майсемпе те сарас пулать. Вӗсен опычӗпе ӗҫлеме вӗрентсе, кашни рабочие стахановец пулма пулӑшмалла.

Предприятисемшӗн ответлӑ тапхӑр пулса тӑракан хӗллехи кунсем ҫывхарса килеҫҫӗ. Хӗллехи вӑхӑтра та тухӑҫлӑн ӗҫлес тесен, предприятисене хӗле хатӗрлемелле, чӗртаварсем, вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлесе хумалла. Ҫак ӗҫсене пӗтӗмпех халӗ, ҫуллахи вӑхӑтра, пурнӑҫа кӗртес пулать.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту промышленность работникӗсене вӑй-хӑвата ӳстерсе ӗҫлеме чӗнет. Партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен, хуҫалӑх руководителӗсен кулленхи хисеплӗ тивӗҫӗ—пиншер рабочисемпе служащисене тата инженерсемпе техниксене уяв умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту ялавӗ айне тӑма, фронтпа ҫӗршыв валли продукци ытларах туса кӑларас тӗлӗшпе хӑйсен пултарулӑхне мобилизацилеме пулӑшасси пулать.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пырса, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвар. Нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн шӑтӑкӗнчех пӗтерсе тӑкма мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшар!

Октябрь уявне стахановла ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн

Куславкка комбинатӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен фронтовой бригадисем иртнӗ уйӑхра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунӑ. Худяков юлташ ертсе пыракан бригада уйӑхри плана 400 процент тултарнӑ. Унӑн бригадине заводри куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялава панӑ. Знакина юлташ бригадинчи ҫамрӑксем пурте кулленхи нормӑна 200 процент таран тултараҫҫӗ. Унӑн бригадине Краснодон геройӗ комсомолец Олег Кошевой ятне панӑ. Ҫавӑн пекех Ефремова юлташ ертсе пыракан бригадӑна Зоя Космодемьянская ятне панӑ.

Ҫӗнӗ производствӑна йӗркелес тӗлӗшпе стахановла ӗҫленӗшӗн тата производство планне яланах ирттерсе тултарнӑшӑн заводри ҫамрӑксене С. Алексеев, В. Степанова, М. Крысунова, Шилков, Куприянов, Фролова тата ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комбинатри комсоргне Ваганова юлташсене нумаях пулмасть социализмлӑ ӑмӑрту отличникӗн значокӗсемпе наградӑланӑ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту кунран-кун анлӑн сарӑлса пырать. Халӗ ҫамрӑксем Октябрь уявне фронта пулӑшас ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

(Хамӑр инфор.).

Малта пыракан артельсенче

Чӑвашпромсоюз системине кӗрекен артельсенчен чылайӗшӗсем август уйӑхӗнчи плана ирттерсе тултарчӗҫ. Ҫапла, Шупашкарти «Кооператор» артель 186 процент, «Пекарь» артель 166 процент, «Металлист» артель 152 процент тултарнӑ. Улатӑр хулинчи артельсем те кая юлмаҫҫӗ. «8-ое Марта», «Красный Восход», «Гигиена» артельсем пурте плана ирттерсе тултарнӑ. Сӗнтӗрвӑрри хулинчи артельсем продукци туса кӑларассине чылай ӳстернӗ.

Халӗ малта пыракан артельсенче ӗҫлекенсем, Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыма, продукци пахалӑхне лайӑхлатма тата унӑн хӑйне ларакан хакне йӳнетме ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

А. ФИЛАТОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 9-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Румынин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ЧОМУРНА, ФРУМОАСА, ГУРА-ГУМОРА, СЛАТИОАРА ОСТРА, КОТЫРКАШИ, САБАСА, ЛАРГУЛУЙ, БИСТРИЧИОРА, ЖЕДАНТЕЛЕК ятлӑ пысӑк ялсем тата ГУРА-ГУМОРА, ФРАСИН, МОЛИД ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем, унтан тата Румыни ҫарӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫса, ТЫРГУЛ-САКУЕСК ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пункта туртса илнӗ.

Румынин вӑтаҫӗрти пайӗнче пирӗн ҫарсем АЛЬБА-ЮЛИЯ хулине, ТЕЙУШ, МИХАЛЦ, ВАЛЯ-ЛУНГО, МИКЕСХАЗА, КИШ-КАПУШ ятлӑ пысӑк ялсене тата КОПША-МИКА, МИКЕСХАЗА, ТЕЙУШ, ПОДУЛ, МУРЕЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ.

Болгарире УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла куҫса пырса, ШУМЕН (ШУМЛА) хулипе чугун ҫул узелне, РАЗГРАД хулине туртса илнӗ тата, ХУРА ТИНӖС флочӗпе пӗрле ҫыхӑнса кӗрешсе, Хура тинӗс ҫинчи БУРГАС хулипе пысӑк порта туртса илнӗ. Икӗ кун хушшинче пирӗн ҫарсем 21.000 болгар салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. РАЗГРАД хули районӗнче пирӗн ҫарсем 4.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 35 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 8 самолетне персе ӳкернӗ.

СЕНТЯБРӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 10-мӗшӗнче Румынин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере пырса, ВАМА хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, РУССКАЯ-МОЛДАВИКА, ВАТРА-МОЛДАВИКА, КРУЧА, ХОЛЬДА, БРОШТЭНИ, ДЬЕРДЬО-БЭКАШ ятлӑ ялсене йышӑннӑ.

Румынин вӑтаҫӗрти пайӗнче пирӗн ҫарсем, Румыни ҫарӗсемпе пӗрле ҫапӑҫса, СФЫНТУЛ ГЕОРГЕ хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — КАТАЛИНА, КАРАТНА, БЮКСАД, МАЛЬНАШ, АЙТА, МИЖЛОКИ ятлӑ пысӑк ялсем тата СЫНКАТОЛНА, САКУЕСК, СЫНЗЕНИ, БЮКСАД, БОДОК ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Сентябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 8 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 10 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Румынин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Нимӗҫсем хӑйсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗ туса хунӑ Вама хулишӗн хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Ку хулана ҫурҫӗр енчен, хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑртан ҫӳллӗ вырӑнсем тата Молдавикӑпа Молдава ятлӑ ту шывӗсем хӳтӗлесе тӑнӑ. Ҫак питӗ лайӑх позицисене тӑшман хытӑ хӳтӗленӗ, темиҫе хутчен те контратакӑна кӗре-кӗре кайнӑ. Пӗр талӑк хушши пӗр чарӑнмасӑр ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн совет чаҫӗсем Вама хулине туртса илнӗ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Ытти 200 гитлеровеца ытла тыткӑна илнӗ. Ытти участоксенче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла куҫса пынӑ, чылай ялсем туртса илнӗ.

* * *

Румынин вӑтаҫӗрти пайӗнче пирӗн ҫарсем Румыни ҫарӗсемпе пӗрле ҫурҫӗрти Трансильвани патне пырса тухнӑ. Кунта венгерсем нумай вӑхӑта пымалли оборона тӑрӑхӗ туса хунӑ, бетонран тунӑ дотсем чавса лартса тултарнӑ. Тӑшман хытӑ персе тӑнӑ. Минӑсем лартса тултарнӑ, пралук карса тухнӑ, ҫаксем пирӗн чаҫсене ҫапӑҫма питӗ хытӑ кансӗрленӗ. Паян совет ҫарӗсемпе Румыни ҫарӗсем тӑшман оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне Сфынтул Георге хулине штурмласа туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсемпе венгерсен салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем нумай выртса юлнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Иелгава хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ. Пирӗн пехотӑпа артиллери нимӗҫсен атакисене пурне те ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ. 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра тӑшман совет позицийӗсем патнелле 12 танкетка-торпеда янӑ. Пирӗн оборона патне пымалли вырӑнсенче минӑсем ҫине пырса кӗрсе, 9 танкетки сирпӗнсе кайнӑ, 2 танкеткине пирӗн артиллери персе ҫӗмӗрнӗ. Тепӗр танкеткине пирӗн боецсем тытса илсе сиенсӗрлетнӗ.

* * *

Рига хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн Соболев майор командир пулса ертсе пыракан летчик-истребительсен пӗр ушкӑнӗ, сывлӑшра нимӗҫсен 14 истребительне тӗл пулнӑ. Сывлӑшра ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ. Соболев майор тӑшманӑн икӗ самолетне, Завацкипе Мельник лейтенантсем пӗрер самолет персе ӳкернӗ. Юлашки кунсенче истребительсен пӗр эскадрильи нимӗҫсен 15 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫавсенчен 7 самолетне Константин Соболев майор персе ӳкернӗ.

* * *

Мариамполь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ персе тӑнӑ. Советсен разведка тӑвакан отрячӗсем гитлеровецсене пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ, хӑшнепӗрне тыткӑна илнӗ. Пирӗн пӗр подразделенири снайперсем Абросов, Чистяков тата Морозов юлташсем кун каҫиччен 19 нимӗҫе вӗлернӗ.

* * *

Ломжа хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем вӑрманлӑ вырӑна нимӗҫсенчен тасатнӑ. Тепӗр районра пирӗн темиҫе танк Затонайченко старши лейтенант командир пулса ертсе пынипе тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ та шыв каҫҫи патӗнче засада туса ларнӑ. Ҫав каҫӑ патне тӑшман колонни пырса ҫитсен, пирӗн танкистсем вӗсене пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсем хӑраса ӳкнӗ. Унтан совет танкӗсем засадӑран тухнӑ та гитлеровецсене тӳрремӗнех персе аркатма тытӑннӑ. Нимӗҫсен 250 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 15 тупӑ тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 5 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав каҫӑ патне часах тепӗр енчен нимӗҫ танкӗсем пырса ҫитнӗ. Вӗсем ҫав шыв урлӑ каҫӑсӑрах ишсе каҫма хӑтланнӑ, анчах та унӑн шурлӑхлӑ хӗрринче путса ларнӑ. Совет танкисчӗсем вӗсене пеме пуҫланӑ та 5 танкне ҫунтарса янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 106-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 240-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ оберефрейтор Генрих Масбах ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Пирӗн дивизи Кишинев хулинчен ҫурҫӗртерехре оборона тытса тӑратчӗ. Августӑн 22-мӗшӗнче дивизие хӑвӑрт каялла чакма приказ пачӗҫ. Рота командирӗ пире ҫапла ӑнлантарса пачӗ: вырӑссем Яссы хули районӗнче тата Тирасполь хулинчен кӑнтӑртарахра нимӗҫсен позицийӗсене татса кӗрсе кайнӑ, вӗсем пирӗн дивизи тылне тухма пултараҫҫӗ, терӗ. Ҫак хыпар салтаксене хуйхӑртсах ячӗ. Салтаксем пурте хӑйсене ҫавӑрса илесрен хӑраса ӳкрӗҫ.

Малтанах эпир йӗркеллӗнех куҫса пытӑмӑр, вырӑссем тӗл пулни пулмарӗ. Анчах та дивизи Прут шывӗ хӗррине ҫитсессӗн, калама ҫук хӑрушӑ ӗҫ пулса тӑчӗ. Пире совет танкӗсем тапӑнчӗҫ. Халиччен курман пӑтрану пуҫланса кайрӗ. Салтаксем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пӗр енчен тепӗр енне чупма пуҫларӗҫ, вӗсене пурне те танксем хӑйсен гусеницисемпе таптаса вӗлерсе пычӗҫ. Эпӗ пӗр пӗчӗк ушкӑн салтакпа кӗпер тӑрӑх Прут шывӗн хӗвеланӑҫ хӗррине чупса каҫрӑм. Эпир вӑрманта пытантӑмӑр та хӗвеланӑҫ еннелле кайма шут тытрӑмӑр. Ҫул ҫинче эпир нимӗҫ салтакӗсен пирӗн пекех сапаланса кайнӑ ушкӑнӗсене тӗл пултӑмӑр, вӗсем те ӑҫта куҫ курнӑ ҫавӑнталла кайма шут тытнӑ. Фронтра мӗн пулнине, фронт ӑҫта тӑнине никам та пӗлмен. Виҫҫӗмӗш кунне эпир вырӑссен пехотине тӗл пултӑмӑр. Ҫӗнӗ хуранран тухса тарма темӗн чухлӗ хӑтлансан та, пирӗн ӗҫ тухмарӗ. Пире пурне те хӗҫпӑшалсӑрлатрӗҫ те тыткӑна илчӗҫ. Халӗ эпир лайӑх пӗлетпӗр ӗнтӗ: вырӑссем патне «хурана» лекме ҫӑмӑл, анчах та унтан ҫӑлӑнса тухмалли ҫук вара».

Совет Союзӗн Маршалӗ Р. Я. Малиновский

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Арми генералне Р. Я. Малиновские ҫар званийӗ—Совет Союзӗн Маршалӗ ятне парасси ҫинчен

Арми генералне Родион Яковлевич Малиновские ҫар званийӗ — Совет Союзӗн Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи сетябрӗн 10-мӗшӗ.

Всевобуч пирки закон тухнӑранпа виҫӗ ҫул тултарас умӗн

СОВЕТСКОЕ, сентябрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Сентябрӗн 18-мӗшӗнче пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫар ӗҫне вӗрентесси ҫинчен правительство постановлени йышӑннӑранпа виҫӗ ҫул ҫитет. Ҫак куна паллӑ тума хатӗрленсе, районра всевобуч пунктӗнче вӗренекен призывниксен пӗр кунлӑх сборӗ пулса иртрӗ. Сбор вӑхӑтӗнче призывниксене тӗнчери ӗҫсемпе Совет Союзӗн шалти лару-тӑрӑвӗ ҫинчен докладсем туса пачӗҫ, калаҫусем ирттерчӗҫ. Всевобуч пирки закон тухнӑранпа виҫӗ ҫул тултарни ҫинчен В. Якимов капитан доклад туса пачӗ. Сбор вӑхӑтӗнче всевобучра вӗренекен призывниксем хӗҫпӑшалсен материальнӑй чаҫне мӗнле пӗлнине тӗрӗсленӗ, тӗрӗслӳ вӗренекенсем лайӑх пӗлнине кӑтартрӗ. Ҫавӑн пекех сбор вӑхӑтӗнче вӗренекенсен сывлӑхне те тӗрӗсленӗ.

Я. СИГАЕВ.

„Ирӗке кӑларнӑ Харьковщина" ятлӑ выставкӑра

Августӑн 23-мӗшӗнче Харьковра Дзержинск площадӗнче «Ирӗке кӑларнӑ Харьковщина» ятлӑ выставка уҫӑлнӑ. Ҫав выставкӑра тӑшмантан ирӗке кӑларнӑ ҫӗр ҫинче совет ҫыннисем пӗр ҫул хушшинче тунӑ ӗҫсене кӑтартнӑ.

Выставкӑра йывӑр, ҫӑмӑл тата ытти промышленноҫсен продукцине вырнаҫтарса лартнӑ. Харьков облаҫӗнчи колхозсемпе совхозсем — ирӗке кӑларнӑ ҫӗр ҫинче тухӑҫлӑн ӗҫленин чаплӑ итогӗсене кӑтартса параҫҫӗ.

Колхозсемпе совхозсене хуҫалӑха ура ҫине тӑратма нумай пулӑшакан наукӑпа тӗпчев институчӗсен ӗҫӗсене те анлӑн кӑтартнӑ. (ТАСС).

Фронтри пек ӗҫлемелли вунӑкунлӑх

Сентябрь 5 — Сентябрь 15

Государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе пулса иртнӗ воскресник

ОКТЯБРЬСКОЕ.

Сентябрӗн 10-мӗшӗнче комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксен воскресникӗ пысӑк ҫӗкленӳпе пулса иртрӗ. Государствӑна тырӑ пама хӗрлӗ обозпа кайнӑ 466 ҫынран 292-шӗ комсомолецсем. Воскреснике колхозниксемпе колхозницӑсем те активлӑн хутшӑнчӗҫ. Ҫав кун районри колхозсенчен хатӗрлев пунктне тырӑ тиенӗ 466 лавран тӑракан хӗрлӗ обоз кайрӗ. Пӗр кун хушшинче 1.349 центнер ытла тырӑ леҫнӗ. Государствӑна тырӑ пама хӗрлӗ обоз организацилес тӗлӗшпе уйрӑмах комсомолӑн «Звезда» (секретарӗ Смирнов), «Комбайн» (секретарӗ Сорокина), «Анис» (секретарӗ Сергеева) колхозсенчи пуҫламӗш организацийӗсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. «Звезда» колхозран 25 лавпа 90 центнер, «Комбайн» колхозран 30 центнер, «Анис» колхозран 48 центнер тырӑ леҫнӗ.

Тырӑ парас тӗлӗшпе ӗнтӗ виҫӗ хутчен воскресник ирттертӗмӗр. Малашне татах воскресниксем ирттерсе, государствӑна вӑхӑтра тырӑ парса татассишӗн кӗрешетпӗр.

А. ПЕТРОВА,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

* * *

КУКЕҪ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникне районри колхозсем пурте активлӑн хутшӑнчӗҫ. Ҫав кун вӗсем государствӑна 151 тонна тырӑ леҫнӗ. Тулли тырӑ лавӗсемпе пуринчен ытларах комсомолецсемпе ҫамрӑксем (540 ҫын) пычӗҫ. Акӑ, комсомолец Скворцов юлташ ертсе пыракан «Зерно» колхозри ҫамрӑксем, ҫав кун 8 лавпа тырӑ леҫсе, государство умӗнчи пӗрремӗш тивӗҫе пурнӑҫларӗҫ. Ҫавӑн пекех «Чӑваш Коммуни», «Трудовик», «Малалла», «Крахмал» тата ытти чылай колхозсем те ӗнерхи кун государствӑна тырӑ парса татрӗҫ.

Т. АНДРЕЕВА,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Колхозниксем тӑрӑшса ӗҫленине пула

Тырпула вӑхӑтра пухса кӗртес пулать, вара унӑн тухӑҫӗ пысӑк пулать. Кӑҫал эпир тырра сентябрьччен вырса пӗтертӗмӗр, ҫийӗнчех кӗлте турттарса капана хыврӑмӑр. Халӗ пирӗн авӑн ҫапса пӗтересси ҫеҫ юлчӗ.

Ҫак ҫитӗнӗве тума пире тырпул пухса кӗртес ӗҫе партипе правительство постановленийӗнче кӑтартнӑ пек йӗркелени, колхозниксем тӑрӑшса ӗҫлени пулӑшрӗ. Ҫав постановление эпир колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса патӑмӑр. Пирӗн кашни колхозник тырӑ вырнӑ вӑхӑтра ӑҫта тата мӗн чухлӗ ӗҫлемеллине пӗлсе тӑчӗ. Тырра уйрӑм сдельщинӑпа анлӑн усӑ курса выртӑмӑр. Ҫынсем вӑя шеллемесӗр, ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ. Хирти ӗҫ ҫӗрлесенче чарӑнмарӗ: колхозниксем уйӑх ҫутипе тырӑ выратчӗҫ. Виҫҫе панӑ участоксене хӑвӑртрах вырса пӗтерме тӑрӑшса, колхозниксем пурте нормӑна тултарса пыратчӗҫ. П. Иванова, Т. Степанова колхозницӑсем ыраша нормӑпа пӑхнинчен 1,5 хут тухӑҫлӑрах вырчӗҫ. Колхозра жнейка ҫук пирки, сӗлле кӗреплеллӗ ҫавасемпе ҫултӑмӑр. Лайӑх ҫулакансем кунне 0,30 гектар вырӑнне 0,40-шер гектар е ытларах та ҫулчӗҫ. Н. Васильева, Е. Филиппова колхозницӑсем кашни кун ҫуршар гектар таран ҫулса пуҫтаратчӗҫ.

Ҫапла вара эпир ыраша 9 ӗҫ кунӗнче, ҫуртыррисене 10 ӗҫ кунӗнче (планпа пӑхнинчен пӗр кун маларах) пухса кӗртрӗмӗр.

Колхоз тырӑ вырма тухсан виҫӗ кунтанах авӑн ҫапма тытӑнчӗ. Пирӗн молотилка ҫӗрӗн-кунӗн пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет, ҫынсемпе лашасем ҫеҫ улшӑнса тӑраҫҫӗ. Талӑкра 200 пӑт вырӑнне 400 пӑт ҫапса кӑларатпӑр. Авӑна ҫурри ытла ҫапнӑ ӗнтӗ. Ҫапмалли — ыраша сӗлӗ юлнӑ.

Государство умӗнчи пӗрремӗш тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫларӑмӑр: сентябрӗн 3-мӗшӗ тӗлне обязательство тӑрӑх тырӑ парса татрӑмӑр. Ҫак ӗҫре А. Павлова юлташ ертсе пыракан транспорт бригади лайӑх ӗҫленине палӑртмалла. 5 лашапа 5 ҫынран тӑракан бригада Етӗрнери хатӗрлев пунктне пӗр чарӑнмасӑр тырӑ турттарчӗ. Бригада часах государствӑна ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем леҫме пуҫлать.

Кӗрхи тырӑсене эрне хушшинче, августӑн 19-мӗшӗччен, акса хӑвартӑмӑр. Тӳрем уйсене пӗтӗмпех ретлӗ майпа акрӑмӑр. Ҫалчасем тикӗс те парка шӑтса тухрӗҫ. Халӗ ҫине тӑрсах кӗрхи ҫӗртме тӑватпӑр. Ӑна правительство кӑтартнӑ срокчен туса пӗтерме шутлатпӑр.

Тырӑ вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн выльӑх-чӗрлӗх витисене хӗле хатӗрлеме тытӑнтӑмӑр. Сысна витине тӗпренех юсарӑмӑр. Ҫитес кунсенчех ӗнесем хупмалли ҫурта ӑшӑ тытмалла тӑватпӑр.

Фронтран савӑнӑҫлӑ хыпарсем килсе тӑраҫҫӗ. Часах пирӗн тӑван ҫӗршыв нимӗҫ ирсӗрӗсенчен тасалса ҫитет, ҫӗнтерӳ кунӗ инҫе мар, пирӗн урамра пысӑк уяв пулать. Ҫав уява хӑвӑтрах уявлас тесе, пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем фронтри пек ӗҫлеҫҫӗ, паттӑр Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлине пурне те парса тӑма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах эпир колхозниксен пурнӑҫне лайӑхлатасси ҫинчен те манмастпӑр. Авӑн ҫапса пӗтернӗ хыҫҫӑн, колхоза кирлӗ фондсене ҫителӗклӗ хыватпӑр та, ытти тырра ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫетпӗр. Кӑҫал пирӗн ӗҫкунӗ сулӑмлӑ пулас пек курӑнать-ха.

Г. МАТВЕЕВ.
Муркаш районӗнчи «Броневик» колхоз председателӗ.

Пӗр кунта 3.000 центнер тырӑ леҫнӗ

ШАХАСАН, сентябрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Ӗнер, вырсарникун, районри колхозсем государствӑна 950 лавпа 3000 центнер тырӑ леҫрӗҫ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз 180 центнер, «Ударник» колхоз 110 центнер, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 120 центнер леҫнӗ.

Вунӑкунлӑхра уйхир ӗҫсене туса пӗтеретпӗр

ШАМАРША. Тырӑ вырса пухас ӗҫре «Заря» колхоз районра мала тухрӗ. Ҫуртыррисене вырнӑ чухне икӗ комсомолец Ф. Егоровпа М. Кузьмин юлташсем жнейкӑсемпе хастаррӑн ӗҫлерӗҫ. Вӗсем 4-шар гектар вырӑнне 8—10-шар гектар вырса пычӗҫ. Вӗсем тулӑ вырнӑ вӑхӑтра хӑҫан каннине те пӗлме ҫукчӗ, яла тавӑрӑнмасӑр ӗҫлетчӗҫ.

Колхозра хӗрӳллӗ ӗҫ вӗресе тӑрать. П. Гусева, Н. Павлова стахановкӑсем итем ҫинче кулленех нормӑна 200 процент таран тултарса ӗҫлеҫҫӗ. 55 ҫулхи Евдокия Андреева (унӑн виҫӗ ывӑлӗ фронтра) ӗҫре ҫамрӑксенчен кая юлмасть, кулленхи нормӑна 135—150 процента ҫити тултарать.

Кӗрхи тырӑсене вара «Заря» колхоз уйӑх каяллах вырса пӗтерчӗ. Халӗ государствӑна тырӑ памалли тата кӗрхи ҫӗртме тумалли плансене ҫывӑх кунсенчех тултарассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Колхоз ыраш акса пӗтернӗ, кӗртыррисем пӗр тикӗс шӑтса тухрӗҫ.

Уйхир ӗҫӗсене, авӑн ҫапассине тата государствӑна тырӑ парассине вунӑкунлӑхра туса пӗтеретпӗр.

Е. ТИМОФЕЕВА.

Махорка касса пуҫтарма тытӑннӑ

ЙЕПРЕҪ. «Коминтерн» колхоз кӑҫал 14 гектар ҫӗр ҫине махорка лартнӑ. Махорка пӑхса ҫитӗнтерме Я. Чугунов ватӑ колхознике ҫирӗплетнӗ. Вӑл ӗнтӗ ку ӗҫпе 1934 ҫултанпах ӗҫлет. Вӑл махоркӑна мӗнле туса илмелли ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене е ун пирки хаҫатсем ҫине пичетленсе тухакан статьясене вуласа вӗренсех пырать. Чугунов юлташ, агротехника кӑтартнӑ пек, махорка хушшисене кӑҫал 3 хутчен кӑпкалатнӑ, 3 хутчен махорка тӑррисене татса пӑрахнӑ.

Халь ҫак паха ҫитӗннӗ махоркӑна касса пуҫтарма тытӑннӑ. Ун валли Чугунов юлташ чылай малтан ҫакмалли каштасем хатӗрленӗ, хӳтӗ вырӑнсем тупса хунӑ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче мĕншĕн финанс планне тултармаççĕ?

Хĕрлĕ Чутай районĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана 1943 çулта та тултарман. Вăл 1944 çула пĕр миллион тенкĕ ытла парăмпа кĕнĕ. [illegible]

Государство умĕнчи парăмсене колхозниксем [illegible] отдел заведующийĕн И. Поповăн 1.075 тенкĕ, ВКП(б) райкомĕн отдел заведующийĕн М. Ивановăн 430 тенкĕ, çырлаçимĕçсен завочĕн директорĕн Артемьевăн 430 тенкĕ ытла парăм пур. Кун пек [illegible]

[illegible] укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарма пултарать.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Шупашкарти чăваш шкулĕнче

Вĕсем партăсем хушшине ларма пуçланăранпа пĕр эрне çеç иртрĕ-ха. Шкулăн çамрăк йышĕ майĕпенех вĕренĕве хăнăхса пырать. Таса та çутă класра халь ачасем хăйсене килти пекех хăюллăн тытаççĕ.

Людмила Ивановна Савельева Шупашкарти чăваш шкулĕнче иккĕмĕш çул ĕçлет, анчах кăçалхи 1-мĕш класра вĕрентмен. Чи пуçласа партăсем хушшине ларакан ачасене тĕрĕс воспитани парас ĕçе вăл ответлăрах ĕç вырăнне хурать. Çавăнпа та вăл хăйĕн мĕнпур кăмăлĕпе пĕлӳлĕхне çамрăк ачасене вĕрентнĕ çĕре пама тăрăшни палăрать. Урокра вăл ăнланмалла тата ăшшăн калаçать. Кашни ача унăн сăмахне мĕнле ăнланнине пĕлме тăрăшать. Вăл сăмахпа каласа çеç мар, ачасене чĕнсе кăларса хăйсене тутарса та вĕрентет. Сăмахран, çыру урокĕнче çырма тытăниччен малтан ачасем кăрандашсене пурте çӳле çĕклеççĕ те сывлăшра çекĕллĕ патак çыраççĕ. Ун хыççăн тин хут çине çырма тытăнаççĕ. Çынсене хирĕç пулсан хисеп тума вĕрентнĕ чухне те ачасене хăйсене тутарттарса пăхтарать. Ачасем çынна хирĕç пулсан ăна хисеп тума, кăранташсене тĕрĕс тытса çырма часах вĕренсе çитнĕ. Вĕсем çак кунсенче букварь çинчи картинка тăрăх мĕн курса асăрхани çинчен каласа пама, учительница пулăшнипе калаçуран предложени уйăрса илсе ăна сăмахсем çине пайлама вĕреннĕ, картинкăсем ӳкерме, цифрăсене тĕрĕс çырма пĕлеççĕ.

Ачасене çапла юратса вĕрентни ачасемпе учительница хушшинчи çыхăнава çирĕплетет. Вĕсем вĕрентекен сăмахне итлекен, ăна пурнăçласа пыракан пулаççĕ.

Вĕренӳ çулĕ — совет шкулĕн пурнăçĕнчи хĕрӳллĕ те ответлă тапхăр. Чăваш шкулĕ çак тапхăрта çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе çĕнĕ ӳсĕмсем тăвасса шанма пулать.

З. МИТРОФАНОВА.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пурăнмалли çурт-йĕрсемпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ăмăртăвĕн 1944 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, пурăнмалли çурт-йĕрсемпе коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн августри итогĕсем тăрăх, Канашри Колхозник çуртчĕ (заведующийĕ Паторов юлташ) мала тухнă тесе палăртнă, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çавăнтах хăварма тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5000 тенкĕ памалла тунă.

Август уйăхĕнче Улатăрти гостиница лайăх ĕçленине палăртнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ, коммуналлă мунчасемпе парикмахерскисем хăйсен ĕçне сӳрĕклетнине палăртса, Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариатне тата хула совечĕсен исполкомĕсене çав предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Вăрçă инваличĕсем ответлă ĕçсенче

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхозра вăрçă инваличĕсем ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозра та фронтри пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Петр Курчин учетчик пулса ĕçлет. Вăл ĕçкунĕсене лайăх шута илсе пырать. Егоров Иван бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади колхозра пур ĕçре те малта.

Василий Зайцев ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа ферма ĕçĕ нумай лайăхланчĕ. Ферма хăйĕн планне тултарнă. Витесене тĕплĕн юсанă, выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ таран апат хатĕрлесе хунă.

В НАУМОВ.

УЧАСТОКСЕНЧИ ВРАЧСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ СЪЕЗДĔНЧЕ

Участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ сентябрĕн 10-мĕшĕнчи ларусенче врач участокĕсен ĕçĕсем çинчен Вăрнар районĕнчи Уравăш участокĕнчи И. Вольский, Пăрачкав районĕнчи Сиява участокĕнчи А. Волкова врачсен тата Елчĕк районĕнчи больница заведующийĕн Е. Комиссарова юлташăн, Канаш районĕнчи Сиккасси участокĕнчи Т. Воробьева врачăн доклачĕсене итлерĕ. Ун хыççăн пренисем пуçланчĕç.

Пренисенче тухса калакансем: Плавник (туберкулезран сыватакан Шупашкарти диспансерăн главнăй врачĕ), Васильева (трахома институчĕн врачĕ), Лунева Ишек больници), Гутман (ачасем çуратмалли çурт), Покровский (Аптека Управленийĕ), Тайков (Хĕрлĕ Чутай), профессор Мурзин (Тутар республикин представителĕ), Комякова (Шăхасан районĕ), профессор Чемолосов тата ытти юлташсем, республикăри ĕççыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсене палăртнипе пĕрлех, чылай çитменлĕхсене палăртрĕç.

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче, пренисем вĕçленнĕ хыççăн, съезда пухăннă медицина работникĕсем Вольтер профессорăн шатра чирĕ тата унпа кĕрешесси çинчен, Караваев профессорăн ачасене чир-чĕртен сыхласси çинчен тунă доклачĕсене итлерĕç.

РЕСПУБЛИКĂРИ ИППОДРОМРА

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Шупашкарта, республикăри ипподромра, хăвăрт юртакан лашасен иккĕмĕш черетлĕ ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва 26 лаша хутшăнчĕç. Вĕсенчен 18-шĕ — колхозсен, 8-шĕ — Сăр леш енчи лаша завочĕн лашисем.

Сентябрĕн 3-мĕшĕнчи ăмăртăва хутшăннă лашасемсĕр пуçне, иккĕмĕш ăмăртăва Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозăн «Песня» ятлă кĕсри, Муркаш районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн «Отзыв» ятлă ăйăрĕ, Сăр леш енчи лаша завочĕн «Чижик» ятлă ăйăрĕ тата Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» тата «Красный бригадир» колхозсен икĕ çулти лашисем хутшăнчĕç.

Сăнамалли иккĕмĕш ăмăртура каллех, сентябрĕн 3-мĕшĕнчи пекех, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Запрет» ятлă ăйăрĕ мала тухрĕ. Вăл сентябрĕн 3-мĕшĕнче 1.600 метра 2 минута та 28 секундăра юртса тухнăччĕ. Иккĕмĕш ăмăртура вара вăхăта пĕр секунда кĕскетрĕ.

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче сăнамалли ăмăртăва хутшăннă лашасем малтанхи ăмăртуринчен лайăхрах юртрĕç. Етĕрне районĕнчи «Борец» колхозăн «Аван» ятлă ăйăрĕ 1.600 метра 2 минута та 29 секундăра юртса тухрĕ. Малтанхи кун пулса иртнĕ ăмăртупа танлаштарсан, вăхăта вăл 4 секунда кĕскетрĕ. Сăр леш енчи лаша завочĕн «Засурская» ятлă кĕсри те лайăхрах юртрĕ. Вăл сентябрĕн 3-мĕшĕнче 1.600 метра 2 минута та 31 секундăра юртса тухнăччĕ, халĕ вара çак вăхăта вăл 7 секунда кĕскетрĕ. Лашине Н. Устинов наездник ертсе пычĕ. Ăмăртура пулнă рысаксенчен Сăр леш енчи лаша завочĕн «Зорька» кĕсре (наездникĕ Н. Устинов юлташ), Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн «Вечерняя заря» ятлă лаши, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коминтерн» колхозăн «Листик» ятлă ăйăрĕ лайăх юртрĕç.

Хăвăрт юртакан лашасен çитес ăмăртăвĕ сентябрĕн 17-мĕшĕнче пулать.

ÇĔНĔ СĔТЕЛ-ПУКАНСЕМ ТУМА ПУÇЛАНĂ

Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем вăрçă вăхăтĕнче сĕтел-пукансем тăвас ĕçе чакарнă пулнă. Халь çав ĕçе çĕнĕрен сарса яраççĕ. Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн фабрики кăçалах 60.000 тенкеле яхăн, 10.000 сĕтел, темиçе пин шкап тата диван сем туса кăлараççĕ.

Ирĕке кăларнă районсенче йывăç каскалакан чи пысăк фабрикăсене юсаса хута яраççĕ. Мускаври икĕ предприятире çĕнĕрен çемçе сĕтел-пукансем тума пуçланă.

Вăрман Халăх Комиссариачĕ йӳнĕрех те илемлĕрех сĕтел-пукансем тăвас тĕлĕшпе конкурс ирттерет. Суйласа илнĕ модельсене вара фабрикăсенче йышлăн тума пуçлаççĕ. (ТАСС).

Союзниксен Францири, Бельгири тата Италири наступленийĕ

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 9-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксем Альберт каналĕ хĕрринче тытса илнĕ плацдармсене аслăлатасшăн кĕрешнĕ, тăшман унта хытăрах хирĕç тăма пуçланă.

Союзниксен чаçĕсем çаплах Рулер урлă наступлени туса пынă, ĕнер вĕсем Киль патне çитнĕ. Халĕ унта хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Кале порчĕпе Булонь портне çавăрса илнĕ унка хĕссех пыраççĕ.

Хĕвелтухăç Бельгире союзниксен çарĕсем Маас шывĕн çурçĕр хĕррипе малалла куçса пынă, тăшманăн пĕр-пĕринчен татăлса кайнă чаçĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Льеж хулине туртса илнĕ (Германи чиккинчен 21 мильăра).

Арден вăрманĕнче союзниксен çарĕсем Живэ хулипе Седан хули хушшинче хĕвелтухăç еннелле куçса пыраççĕ, тăшманăн пĕр-пĕринчен татăлса кайнă пункчĕсем хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Ла-Манш сырăчĕн районне тăшмантан тасатса пынă, Дюнкерк хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Берг хули секторĕнче самаях пысăк çитĕнӳсем тунă. Унтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем Брюгге хули патнелле сывхарса пыраççĕ. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, Альберт каналĕ çинчи плацдарма çаплах аслăлатаççĕ. Союзниксен çарĕсем Гассельт хулинчен 4 миля хĕвеланăçнерехре ларакан Кермпт хули патне тата Тирлемон — Юи секторĕнчи Нодувес-Мариль хулипе Фелько-ле-Кав хули патне сывхарнă. Союзниксен Льеж хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре кĕрешекен ытти чаçĕсем 14 миля малалла кайнă, Лимбург хулине кĕнĕ.

Союзниксен çарĕсем Брест портне çавăрса илнĕ унка хĕссех пыраççĕ, тăшман çаплах хаяррăн хирĕç тăрать.

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Голландири тата Хĕвеланăç Германири транспортне, çулйĕрĕсене тата аэродромĕсене тапăннă. Брест хулипе Булонь хулинчи артиллери позицийĕсене тата çирĕплетнĕ пунктсене атакăланă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 9-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Хĕвелтухăç Францире Франци çарĕсемпе Америка çарĕсем каялла чакакан тăшмана çĕнĕрен йывăр çухатусем кӳнĕ, паха районсене ирĕке кăларнă. Сона шывĕнчен хĕвеланăçнерехре Франци çарĕсем икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн Бон хулипе ытти хуласене туртса илнĕ, вăл шутра — промышленность центрĕ пулса тăракан Ле-Крезо хули, Шаньи хули тата Моншанен-ле-Мин хули. Кунтан хĕвелтухăçнерехре Америка çарĕсем темиçе пунктра Ду шывĕ çине тухнă. Безансон хулинче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă хыççăн Америка çарĕсем малалла куçнă. Французсен малти чаçĕсем Швейцари чикки сывăхĕнче Пьер-Понтэн хулипе Мэш хулине йышăннă.

Италире, фронтăн Адриатика секторĕнче, çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. 8-мĕш арми чаçĕсем тăшманăн çĕнĕ контратакисене сирсе янă. Флоренци хули сывăхĕнче Англи çарĕсем хуларан çурçĕрелле куçнă. Флоренцирен хĕвеланăçнерехре паха çӳллĕ вырăнсене туртса илнĕ.

Югославири çапăçусем

ЮГОСЛАВИ ÇАРĔСЕМ КИЧЕВО, КРОКУПЛЕ, КОСЬЕРИЧ, ДУБ, НОВА ВАРОШ, ЖАБЛЯК, ГАЦКО, ТЕСЛИН ХУЛИСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНА

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Сербире Югослави чаçĕсем вирлĕрех те вирлĕрех тата ăнăçлăрах та ăнăçлăрах наступлени туса пыраççĕ. Топлице шывĕн секторĕнче Югослави чаçĕсем болгарсемпе нимĕçсен аркатса тăкнă çарĕсене хăваласа пыраççĕ, çав çарсем Прокупле—Ниш еннелле чакаççĕ.

Македонире Прилеп—Велес—Скопле чугун çулĕпе шоссе çулĕ—Югослави чаçĕсен аллинче. Хаярран çапăçнă хыççăн Кичево хулине ирĕке кăларнă. Югослави чаçĕсем болгарсен хирĕç тăракан çарĕсене хĕçпăшалсăрлантараççĕ.

Загребпа Белград хушшинчи тата Белградпа Нови Сад хушшинчи чугун çулсем тăрăх çӳресси пачах чарăнса ларнă. Белчина сывăхĕнче Дунай шывĕ çинче икĕ пароход тата горючи тиенĕ темиçе баржана çунтарса янă.

Словенире Люблянпа Триест хушшинчи, Люблянпа Загреб хушшинчи тата Люблянпа Шкофья Лока хушшинчи чугун çулсене, нимĕçсем юсаса тăраканскерсене, Югослави чаçĕсем пăссах пыраççĕ.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Сербире Югослави чаçĕсем çурçĕрелле каякан чи паха çулсене пурне те татса пăрахнă, хуласемпе ялсене оккупантсенчен тата вĕсен тарçисенчен тасатса пыраççĕ. Сербсен 14-мĕш корпусĕ ăнăçлăн наступлени туса пырать. Топлице секторĕнче Прокупле хулине йышăннă. Трофейсем нумай тытса илнĕ; çав шутра —8 танк. Тыткăна илнисем пур, вĕсем хушшинче — хулан нимĕç коменданчĕ. Ниш хулинчен кăнтăртарахра Югослави чаçĕсем Бабичка Гора районне пĕтĕмĕшпех тăшмантан тасатнă. Морава шывĕнчен хĕвеланăçнерехре Югослави çарĕсем Косьерич тата Дуб хулисене тытса илнĕ, кăнтăртарахра Нова Варош хулине йышăннă.

Македонире ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Сербие каякан мĕнпур çулсене татнă.

Черногорире Югослави чаçĕсем Жабляк хулине йышăннă, унтан малалла наступлени туса пырса, Левер-Тару патне тухнă.

Герцеговинăра Гацко хулине йышăннă. Ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем тăшмана Невесине еннелле хăваласа пыраççĕ.

Хĕвелтухăç Боснире, Вишеград секторĕнче, нимĕçсен полкне аркатса тăкнă. Тăшманăн 350 çынна çити вилнĕ.

Вăтаçĕрти Боснире ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Теслич хулине тытса илнĕ.

Словенире тăшмана пĕр çулпа та çӳреме памаççĕ.

«Слободна Югославия» ятлă радиостанци çапла пĕлтерет: Сербире питĕ пысăк восстани сиксе тухнă. Вырăнти халăх ирĕклĕх çарне массăллăн кайса хутшăнать.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем, пĕр пин машина ытла, сентябрĕн 9-мĕшĕнче Рур облаçĕнчи чугун çул объекчĕсемпе промышленность объекчĕсене тапăннă.

«Москито» йышши самолетсен эскадрильисем, 1.800 килограмм таякан бомбăсем тиесе, Нюрнберг хулине йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Хулара тухнă пушарсен çулăмĕ 100 мильăран та курăнса тăнă.

БОЛГАРИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВĂН ПРОПАГАНДА МИНИСТРĔ РАДИО ТĂРĂХ ТУХСА КАЛАНИ

СОФИЯ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин çĕнĕ правительствин пропаганда министрĕ Димо Казасов радио тăрăх тухса сăмах каланă. Çав сăмахра вăл çапла каланă:

«Болгарсемпе болгаркăсем! Хамăр çĕршыва çакăн пек йывăр лару-тăрăва мĕн кĕртсе ӳкернĕ, çавна пирĕн хăвăртрах пăрахас пулать. Çак тĕлĕшпе çĕнĕ правительство чи малтан çакăн пек решенисем йышăнчĕ:

Унăн величестви Болгари патши II-мĕш Симеон конституцин 47-мĕш параграфĕ хушнă тăрăх Указ кăларчĕ. Çав Указ тăрăх, унăн Высочествине Кирил Преславский князе тата Никола Михов генерал-лейтенанта Болгари регенчĕсен ĕçĕсене туса тăрассинчен хăтарнă. Болгари регенчĕсем пулма Венелин Канев профессора, Цветко Бобошевские тата Тодор Павлова хушнă. Министрсен совечĕ пирĕн тăван çĕршыва пĕтес патне илсе çитернĕшĕн айăплисене пурне те—1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ĕçленĕ правительствăсен пур министрĕсене те тата 25-мĕш созыври халăх собранийĕн халăха хирĕç пыракан политикăна ырланă пур депутачĕсене те тытса хупма хушрĕ. Çав çынсен пурлăхĕсене туртса илмелле турĕ.

Министрсен совечĕ Украинăри 3-мĕш фронт командующийĕпе арми генералĕпе Толбухинпа калаçса татăлма делегаци ячĕ. Делегацире çаксем тăраççĕ: профессор Димитр Михальчев, генеральнăй штаб полковникĕ Славчев тата Димитр Ганев. Вĕсем Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи вăрçа пĕтерсе лартас тĕлĕшпе тумалли перемирин татăклă условийĕсене пĕлмелле, Совет Союзĕпе дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма калаçса татăлмалла тата Болгарирен нимĕçсене хăваласа кăлармашкăн Болгари çарĕсемпе совет çарĕсем пĕрле çапăçмалли плансене тумалла.

Министрсен совечĕ йышăннă тăрăх, паянтан вара политикăлла пур ирĕклĕхсемпе правăсем те хăйсен вăйне илеççĕ. Сăмах ирĕклĕхне, пухусен тата организацисен ирĕклĕхне государство хӳтĕлет. Министрсен совечĕ йышăннă тăрăх, халăха хирĕç пыракан мĕнпур чрезвычайнăй законсем пăрахăçа тухаççĕ.

Болгарие вилĕм шăтăкĕ патне илсе çитерме пулăшса тăнă хаçат-журналсене пурне те хупса лартнă. Болгари общественноçĕн ытти мĕнпур хаçат-журналĕсем малашне тулли ирĕклĕхпе усă курса ĕçлеççĕ. Цензура хупăнать. Куçса çӳреме ĕлĕкрех панă удостоверенисем пурте пăрахăçа тухаççĕ. Граждансене кирек хăш еннелле те ирĕклĕн куçса çӳреме юрать.

БОЛГАРИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

СОФИЯ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири радио паян çакăн пек пĕлтернĕ: Болгарире çĕнĕ правительство тунă, тенĕ. Правительствăра çаксем тăраççĕ:

Премьер-министр—Кимон Георгиев,
Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ — Петко Стайнов,
Çар министрĕ — полковник Дамян Велчев,
Çутĕç министрĕ — профессор Димитр Михальчев,
Портфельсĕр министр — Никола Петков,
Обществăллă ĕçсен министрĕ—Борис Стефанов,
Юстици министрĕ — Христо Нейчев,
Финанс министрĕ — профессор Петко Стоянов,
Суту-илӳ министрĕ—Димитр Нейков,
Çĕрĕç министрĕ—Асен Павлов,
Сулйĕр министрĕ—Ангел Державский.
Кусемсĕр пуçне, правительство декречĕ тăрăх, министрсен советне çаксене кĕртнĕ:
Сывлăх министрĕ—доктор Райко Райнев,
Социальнăй ĕçсен министрĕ—Григор Фетмаджиев,
Пропаганда министрĕ—Димо Казасов.

Çар министрĕ пулнă Иван Маринов генерал-майора Германие хирĕç кĕрешекен Болгари çарĕсен главнокомандующине лартнă.

ФРАНЦИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францири радио Францин çĕнĕ правительстви çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ правительствăра çаксем тăраççĕ:

Премьер-министр—де Голль, портфельсĕр министр — Жаннеле, юстици министрĕ—де Ментон, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Бидо, шалти ĕçсен министрĕ—Тиксье, çар министрĕ—Дьетельм, тинĕс-çар министрĕ—Жакино, авиаци министрĕ—Тийон, экономика министрĕ—Мандее-Франс, промышленность производствин министрĕ—Лакост, çĕрĕç министрĕ—Прижан, снабжени министрĕ—Жакоби, сывлăх министрĕ—Бию, ĕç министрĕ—Пароди, çутĕç министрĕ — Капитан, информаци министрĕ—Этьенн, çулйĕр министрĕ—Мейер, финанс министрĕ—Ле Перк, почта, телеграф тата телефон министрĕ—Лоран, Çурçĕр Африка ĕçĕсен министрĕ—Катру.

ГЕРМАНИРИ АРЕСТСЕМ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Германирен пĕлтернĕ тăрăх, унта нимĕçсен 80 журналисчĕпе редакторне ытла тытса хупнă. Вĕсене пурне те Гитлера хирĕç тăраççĕ тесе айăпланă. Халĕ вĕсене пурне те концентрациллĕ лагерьсене хупса лартнă. Тытса хупнисем хушшинче Германири информаци бюровĕн, Трансоцеан агентствин, Зуропа-пресс агентствин тата чылай хаçатсен сотрудникĕсем. Çакăн пекех тата çапла пĕлтереççĕ: Гитлера вĕлерме тапăннă пирки Пруссире, Бранденбургра, Силезире, Вестфалире тата Баварире дворянсен тата офицерсен чи паллă, ĕлĕкренпех пыракан çемьисен темиçе пин членне тытса хупнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ МАНЧЖУРИЕ ТАПĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер «Вĕçекен крепость — Б-29» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем Манчжурири промышленноçăн паха объекчĕсене тапăннă.

КĔСКЕН

* Çурçĕр Италире нимĕçсем оккупациленĕ Генуя, Болонья тата ытти хуласенче те пĕтĕмĕшле забастовкăсем пуçланса кайнă. Милан, Турин тата Новаро хулисенчи нумай предприятисенче ĕçлеме пăрахнă.

* Акăлчансем Лондонран Оттава хулине пĕр анса лармасăр вĕçсе çитме пĕрремĕш хут хăйсен транспорт самолечĕсене кăларса янă. Çав вĕçев сентябрĕн 9-мĕшĕнче пĕтнĕ. Вĕçев 19 сехет те 09 минута пынă.

Тĕнчери лару-тăру

Иртнĕ эрнере вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен çав тери паха ĕçсем пулса иртрĕç, вĕсем фашистла Германин лару-тăрăвне татах та ытларах начарлатрĕç.

Гитлерла пуçлăхсене малашлăх хăратса тăрать. Вĕсенчен пĕри — «ĕç фрончĕ» текенскерĕн руководителĕ Лей «Ангрифф» хаçатра çапла çырать: «Пирĕн вăхăт çав тери тăвăллăн та хурлăхлă иртсе пырать, кун пек чухне иртнĕ кун çине кăна çаврăнса пăхма пулать, малалла пăхма вара май çукпа пĕрех. Эпĕ нумаях пулмасть «Ангрифф» хаçатри хамăн статьяра: хĕвелтухăç фронтĕнчи лару-тăру çирĕпленчĕ, тесе çырнăччĕ, Румынире пулса иртнĕ ĕçсене пула çав сăмахсем суя пулса тăчĕç». Лейĕн ирĕксĕрех çакна йышăнма лекет: вĕсен ĕçĕсем фронтăн кăнтăрти участокĕнче кăна мар, çавăн пекех тата ытти участоксенче те япăх. Вăл çапла çырать: «Эпир çĕнĕ позицисем çине каялла чакрăмăр. Пире кунçул çавăн пек тума хушрĕ. Халĕ ĕнтĕ виççĕмĕш тапхăр пуçланать. Эпир тăшмана кĕтетпĕр».

Вĕсем тăшмана хăш вырăнта кĕтнине Лей каламасть. Лейĕн çав сăмахĕсем ултавлăн пăркаланма хăтланнисем пулса тăраççĕ. Нимĕçсем тăшмана хăйсен çĕрĕ çинче кĕтни пирки Лей каласшăн мар. Хĕрлĕ Çар Хĕвелтухăç Пруссе патне хаяр вăй пулса çитсе тăчĕ. Вăрçă, çапла ĕнтĕ, Германи чиккисем патне хĕвелтухăçĕнчен кăна мар, хĕвеланăçĕнчен те сывăхах пырса çитрĕ. Унта союзниксен çарĕсем, Бельгипе Люгсембурга çĕмĕрсе кĕнĕскерсем, фашистсен йăви патне пымалли вырăнсенче çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе пула Германи оборони хĕсĕнсех пырать. Халĕ ĕнтĕ Румыни хăй те гитлерла Германипе унăн союзникĕ — Венгри çине наступлени тумалли плацдарм пулса тăчĕ. Совет çарĕсем, Турну-Северин хулине йышăнса, Румынипе Югослави чикки патне тухрĕç. Гитлерла Германие хупăрласа пыракан унка кунран-кун ытларах хĕсĕнет. Халĕ ĕнтĕ, ют çĕршыври пĕр обозреватель тĕрĕс палăртнă тăрăх, Гитлерăн «Европăри крепоçне» штурмласси çинчен мар, Европăри «Гитлерăн крепоçне» штурмласси çинчен сăмах пырать. Урăхла каласан, фашистла Германие хăйне пĕтĕмĕшпех çапса аркатасси çинчен сăмах пырать.

* * *

Нимĕçсем, чăн малтан, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче йывăр поражени сем тӳснине пула, фашистсен блокĕ ишĕлсе анчĕ. Чăн та ĕнтĕ, Гитлерăн вăрă-хурахла блокĕнчен халĕ мĕн тăрса юлчĕ-ха? Итали «тĕнĕл» системинчен тахçанах тухса ӳкнĕ. Германи çумĕнчен Румынипе Финлянди те хăйпăнса ӳкрĕç. Гитлерăн Европăри мĕнпур «çĕнĕ йĕрки» ишĕлсе пырать. Хĕрлĕ Çар Польшăна нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн кĕрешет. Чехословакие ирĕке кăларасси те инçе юлмарĕ. Унăн пĕр пайĕнче — Словакире — фашистла оккупантсене хирĕç хĕçпăшаллă пăлхав пуçланса кайнă. Германи Франципе Бельгие çухатрĕ.

Çак фактсенчен ĕнтĕ фашистла пуçлăхсенчен пĕри Лей малалла пăхма мĕншĕн хăраса тăни уççăнах курăнса тăрать. Çав малашлăх гитлеровецсене ыррине нимĕн те сунмасть. Нимĕçсен фашистла радиокомментаторĕ Земмлер çапла палăртать: Германи хăйĕн хальхи лару-тăрăвĕнче вăйлăн кĕрлесе юхакан çырма патне пырса тăнă çулçӳрекене аса илтерет. Унăн çав çырма урлă каçмалла, анчах каçма шанчăклă паром çук. «Пирĕн умра, — тет Земмлер,— пурнăçпа вилĕм хушшинчи пĕр-пĕр çул юппине суйласа илесси тăрать». Фашистла çыравçă йăнăшать: халĕ ĕнтĕ вĕсен суйласа илмелли нимĕн те çук, вĕсен умĕнче — вилĕм кăна.

* * *

Финлянди Германипе тытакан çыхăнусене татрĕ. Перемири тата мир тăвасси çинчен калаçас тĕлĕшпе Совет правительстви малтанлăха палăртнă условисене Финлянди правительстви йышăнчĕ. Финсен çарĕсем тăракан участокра вăрçă ĕçĕсем чарăнчĕç. Мир çинчен калаçма Мускава Финлянди правительствин делегацийĕ килчĕ. Финляндипе Германин ют çĕршывсене туртса илес ĕмĕтпе тунă «туслăхĕ» çапла пĕтсе ларчĕ.

Нимĕçсем çине тăрсах ӳкĕтленĕ пулин те, Финлянди вăрçăран тухма шут туни Германин пĕтсе ларас лару-тăрăвне уççăн кăтартса парать. Пуриншĕн те çакă паллă: Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче мир тăвасси пирки кăçалхи çуркуннех калаçусем пынă. Совет правительстви лартнă условисене тĕнчери обществăллă шухăш тĕрĕс тесе, çавăн пекех тата питех те ырă кăмăллă тесе йышăннă пулин те, çав калаçусене Финляндин ертсе пыракан ушкăнĕсем унчухне татнăччĕ. Финляндин ертсе пыракан ушкăнĕсем унчухне нимĕçсенчен вăрçăра мĕнле те пулин пулăшу илесси çине шанса тăнă.

Хăйсен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймен ĕмĕтсем пулса тăнине ăнланса илме финсене нумаях та вăхăт кирлĕ пулмарĕ. Финлянди çарĕпе Германи çарĕсем Карели перешеекĕнче поражени тӳсни, Хĕрлĕ Çар фронтăн ытти мĕнпур участокĕсенче пысăк çĕнтерӳсем туса пыни чăн-чăн лару-тăрăва яр-уççăн кăтартса пачĕç. Финлянди вăрçăран тухма решени йышăнчĕ. Ăна пулăшма Гитлерăн вăй тупăнмарĕ.

* * *

Болгарин ĕçĕсем кăшт урăхларах пулса пычĕç. Унăн пуçлăхĕсем, «нейтралитет» текен ултавлă политикăпа витĕнсе, ССР Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăра гитлерла Германие тăтăшах активлăн пулăшса тăнă.

Совет правительстви хăй нумай вăхăт хушши чăтса тăма пултарнин тĕслĕхне кăтартса пачĕ. Вăл вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче пулса тăнă лару-тăрăва шута илнĕ. Унчухне пĕчĕкçĕ Болгари Германин вăрçă хăватне хирĕç тăма пултарайман. Анчах лару-тăру улшăнсан, Германи çак вăрçăра пуçĕпех аяла пулни пуриншĕн те паллă пулса тăрсан, Болгаришĕн демократиллĕ çĕршывсен союзĕ çумне хутшăнма лайăх май килсе тухрĕ. Анчах Болгарин ертсе пыракан ушкăнĕсем çав утăма тăвасшăн пулмарĕç.

СССР правительствипе Болгари правительстви пĕр-пĕрин патне янă нотăсем, пирĕн хаçатсенче пичетленсе тухнăскерсем, куçкĕретĕнех çакна кăтартса параççĕ. Болгарин ертсе пыракан ушкăнĕсем Совет Союзĕн тӳсĕмлĕхĕпе хăйсен ырă мар ĕçĕсене тунă çĕрте усă курма хăтланчĕç. Болгари хăйĕн территорийĕ çинче Хĕрлĕ Çар хăваласа пынинчен таракан нимĕç çарĕсене пытарса усранă. Болгарие тытса пыракансем хăйсен çĕрĕ çинче ССР Союзĕн тата пирĕн союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç тăмалли çĕнĕ вучахсем туса хума гитлерла вăрă-хурахсене май туса панă.

Болгарин çав политикине, вăл Германи лагерьне тăрса, тĕрĕссипе, Совет Союзне хирĕç вăрçă вăрçни вырăнне хурса хаклани сĕр пуçне Совет правительстви урăхла нимĕнле те хаклама пултарайман, çавăнпа та вара хăйĕн сентябрĕн 5-мĕшĕнчи нотинче Совет правительстви çапла пĕлтерчĕ: «Совет правительстви Болгарипе текех çыхăну тытса тăма май çук тесе шутлать, Болгарипе мĕнпур çыхăнусене татса, çапла калать: чăннипе унччен Совет Союзне хирĕç вăрçса тăнă Болгари кăна мар Совет Союзне хирĕç вăрçса тăрать, паянтан пуçласа Совет Союзĕ те Болгарие хирĕç çавăн пекех вăрçăллă лару-тăрура пулать».

Çавăн хыççăн та Болгари правительстви икĕ енлĕ политика тытса пыма пăрахмарĕ. Сентябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вăл Совет правительствине хăй Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен пĕлтерчĕ тата ССР Союзĕнчен перемири тума ыйтрĕ. Анчах сентябрĕн 6-мĕшĕнче урăхла пĕлтерӳ пичетлесе кăларчĕ. Унта вăл Совет правительствинчен перемири тума кăна ыйтнă, хăй Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен вара нимĕн те каламан. Болгарин çав позицийĕ, паллах, иккĕлентермесĕр тăма пултараймарĕ. Çавăнпа та перемири тăвасси çинчен Болгари правительстви ыйтнине Совет правительстви пăхса тухма шутламарĕ. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче кăна Болгари правительстви хăй Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен пĕлтерчĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Болгари Германие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерчĕ.

Халĕ ĕнтĕ Совет правительстви Болгари правительстви перемири тăвасси çинчен калаçас пирки ыйтнине пăхса тухмашкăн йышăнма май пур тесе шутларĕ.

* * *

Венгри правительстви официально йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Венгри Румыние хирĕç вăрçă ĕçĕсем пуçласа ячĕ. Румыни çарĕсем Трансильвание пырса кĕчĕç. Пурте çакна пĕлеççĕ: Гитлер Трансильвание Румынирен туртса илсе Венгри аллине, вăл Германие пулăшса тăнăшăн, панă пулнă. Венгрин халиччен те чаплах пулман лару-тăрăвĕ халĕ ĕнтĕ татах та ытларах япăхланать.

Германипе «туслă пулса пурăнни» Венгришĕн хакла ларчĕ. Унăн чи лайăх çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хăйсем валли вилĕм тупрĕç. Пуян çĕршыв виççĕмĕш империн чухăн провинцийĕ пулса тăчĕ. Европăри чи пуян тырпуллă Венгрире кулленхи çăкăр нормине 150 грама çитиччен чакарнă.

Хăйсен халăхне, çавăн пекех тата тĕнчери обществăллă шухăша улталама хăтланса, Венгрин ертсе пыракан ушкăнĕсем хыпăнса ӳксех маневрсем тăваççĕ. Вĕсем хăйсен преступникла политикине Венгрин «географиллĕ лару-тăрăвĕпе» тӳрре кăларма пăхаççĕ. Вĕсем каланă тăрăх, Венгрин çавăн пек лару-тăру килсе тухнă пирки Германипе пĕрле кайма лекнĕ пулать вара.

Чăн та, Гитлерăн Венгрири тарçисем тытса пыракан политикăра «географи» пысăк вырăн йышăнса тăнă, анчах вĕсем хăйсем каланă пекех мар. Вĕсен тусĕсене ют çĕршывсене тытса илес ĕмĕт çавăрнă. Вĕсем хăйсен государствин чиккисене Югославипе Румынирен çĕрсем касса илсе сарма шутланă. Вĕсем пирĕн çĕрсене тытса илме хапсăннă.

Анчах çав «географипе» кăмăллă мар «истори» пулса иртрĕ. Вăрçă Венгри чиккисем патне таччăнах пырса çитрĕ. Венгрин хапсăнчăк правителĕсен хăйсен вăрă-хурахла ĕмĕчĕсемшĕн, гитлерла авантюрăна хутшăннăшăн тата вĕсем совет çĕрĕ çинче тунă тискер ĕçсемшĕн часах ответ тытма лекĕ. Çав ответлăхран Венгри пăрăнса юлаймĕ.

Я. ВИКТОРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00682.